Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

22 (7662) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи мартăн (пуш) 18-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Спорт

Район пуçлăхĕн кубокĕ – чи вăйлисенче

Иртнĕ шăмат кун хĕвеллĕ çанталăк пулни йĕлтĕр сырнисемшĕн те, район пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн иртекен ăмăртăва курма пынисемшĕн те кăмăла хăпартмалли тепĕр сăлтав вырăннех пулчĕ.

Районти предприятисемпе организацисен, учрежденисен ĕç коллективĕсем хушшинче «Россельхозбанкăн» Муркашри хушма офисĕнче ĕçлекенсем ятарлă формăпа тата хăйсен ялавĕпе пулнăран самаях палăрса тăчĕç. Район пуçлăхĕ Юрий Александрович Иванов та вĕсенчен тĕслĕх илмеллине каларĕ. «Пурне те ăмăртура ăнăçусем сунатăп. Чи кирли вара – çак ăмăртура хастар, çĕкленӳллĕ кăмăл пухса малалла та вăй парса ĕçлеме пултарни», – терĕ вăл. Ăмăртакансене саламлакансем хушшинче ЧР патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов, Шупашкарти Муркаш ентешлĕхĕн Канашĕн председателĕ А.И. Федотов тата ыттисем те пулчĕç. Çыннăн ĕçпе кăна мар, спортпа та, культурăпа та пуян пулмаллине палăртрĕç вĕсем.

Икĕ арçынран тата икĕ хĕрарăмран тăракан командăсем йĕлтĕр эстафетине хатĕрччĕ, стартчен юлнă вăхăтра вĕсем тренировкăсем туса ирттерчĕç. Пурĕ вара 60 команда пуçтарăнчĕ стадиона.

Чи малтан старта учительсен командисем тухрĕç. Вĕсем 20 ытлаччĕ. Хĕрарăмсем 2 километрлă, арçынсем 3 километрлă дистанцисене кайрĕç. Вăйлăраххисем вара икĕ тапхăр хыççăн уçăмлăнах курăнчĕç. Финиша пĕрремĕш Çатракассинчи вăтам шкул команди çитрĕ. Иккĕмĕш – Калайкассисем, виççĕмĕш – Муркашри вăтам шкул учителĕсем пулчĕç. **(Вĕçĕ 4-мĕш стр.).**

Сăн ӳкерчĕкре: район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов финиша васкать.

Çур аки çывхарать

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче мартăн 1-мĕшĕ тĕлне сĕрмелли-çунтармалли материалсем мĕн чухлĕ пулнине кăтартни (процентпа)

Колонкăсенче: 1. Дизтопливо. 2. А-76 маркăллă бензин.

Е. Андреев яч. хис.	15,6	0
«Волга»	12,9	20
«Восток»	6,7	28,3
«Герой»	3,7	11,6
Ильич яч. хис.	15,7	5,0
ВТМ	0	0
Ленин яч. хис.	0	2,0
«Лидер»	0	0
«Моргаушская»	24,1	31,8
«Оринино»	8,0	9,1
«Передовик»	0	0
«Свобода»	17,1	13,4
«Сеятель»	100	50,0
Суворов яч. хис.	2,0	0,3
«Рассвет»	0	0
«Ударник»	0,4	0,8
Чапаев яч. хис.	0	0
Чкалов яч. хис.	0	0
«Хлебороб»	0	0
Мичурин яч. хис.	6,7	0
ДаАн	4,7	0
РАЙОНĔПЕ	**9,5**	**8,9**

Паян хресчен пĕтĕм вăйпа çур акине хатĕрленет. Анчах пĕтĕм тĕнчери экономика кризисĕ çĕр ĕçченĕ патне те çитрĕ. Çакна пула хуçалăхсем сĕрмелли-çунтармалли материалсем хатĕрлесси те ытти çулхи пек мар, йывăррăн пырать. Анчах çĕр ĕçченĕ пуç усмасса эпир шанатпăр.

Йышăну

Çурхи ейĕве хатĕрленсе

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов нумаях пулмасть «2009 çулхи çурхи ейĕве ирттерсе ярассине йĕркелесси çинчен» йышăну кăларчĕ. Унпа килĕшӳллĕн районта пурăнакансен, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе предприяти-организаци ертӳçисен çурхи ейӳ вăхăтĕнче тĕрлĕрен чрезвычайлă лару-тăруран асăрханма, çынсене хăрушсăрлăхпа тивĕçтерме, экономика объекчĕсене тĕрĕс-тĕкел ĕçлеме условисем туса пама хатĕр пулмалла. Йышăнăва пурнăçлама ятарлă комисси çирĕплетнĕ. Комисси председателĕ – район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительствăпа архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ В.Г.Никитин. Йышăнура ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, предприяти-организацисен ертӳçисене çак тапхăрти чрезвычайлă лару-тăруран, пушар тухаслăхран çирĕп асăрханма тĕллевлĕ пулма хушнă.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен вырăнсенче çурхи ейĕве йĕркеллĕ ирттерсе яма, чрезвычайлă лару-тăруран тата пушар тухасран сыхланмаллăн хăтĕленме ĕç планĕсем тумалла, унпа ĕçлеме ведомствăллă комиссисем йĕркелемелле. Ĕçсем мĕнле пынине тĕрĕслесех тата çут çанталăк улшăнăвне асăрхасах тăмалла.

Çурхи ейӳ тапхăрĕ çуртсен çивиттийĕсем çинчен пăр усăнса тăнипе тата çакă иртен-çӳренсемшĕн хăрушлăх кăларса тăратнипе те çыхăннă. Çакна курса тăрса çивиттисем çинчи юра тасатассипе те, пăрсене катса тăрассипе те тимлĕ пулмалла.

Юр кайнă вăхăтра çăвасем патĕнчен çĕр юхассине асăрхамалла. Уйрăмах çĕпĕр язвиллĕ выльăхсене пытарнă çăвасем тĕлĕшпе асăрханулăха ӳстермелле.

Çурхи ейӳ вăхăтĕнче юр шывĕ ĕçмелли шывпа хутăшса каясран сыхланни те сывлăхшăн тăрăшниех. Çакна шута илсе ейӳ тапхăрĕнче ялсенче пурăнакансене ĕçмелли таса шывпа тивĕçтересси те малти вырăнта пулмалла.

Асăннă йышăну епле пурнăçланнишĕн район администрацийĕн чрезвычайлă лару-тăру тата гражданла оборона пайĕн ертӳçи Н. Милютин явапла пулса тăрать.

Ыйту – хурав

2010 çулхи халăх çыравĕ

ЫЙТУ: – Халăх çыравне ирттернĕ май камсене-камсене шута илеççĕ-ха?

ХУРАВ: – Пĕтĕм Раççейри халăх çыравĕнче çаксене шута илме тивĕç:

– Перепиç кунĕ тĕлне Раççей Федерацийĕн территорийĕнче шутланакан Раççей гражданĕсене, ют çĕршыв гражданĕсене тата гражданлăхсăр çынсене;

– Раççей Федерацийĕнче яланах пурăнакан граждансене, анчах та перепиç кунĕ тĕлне вĕсем Раççей Федерацийĕн тулашĕнче пулсан.

Раççей Федерацийĕ тунă тĕнчери килĕшӳсемпе ют çĕршыв гражданĕсен иммунитет (пĕр-пĕр çынна, дипломатсене пуриншĕн те кăларнă хăш-пĕр саккунсене пăхăнмасăр пурăнма ирĕк пани) е привилеги пулсан, вĕсене перепиçпе шута илмеççĕ.

ЫЙТУ: – Пĕтĕм Раççейри халăх перепиçне йĕркелесе ирттересси мĕнле пулса иртет-ши?

ХУРАВ: – Çакна валли РФ Правительстви хăйĕн полномочийĕсемпе килĕшӳллĕн çавсене палăртать:

– халăх çыравне хатĕрленсе ирттерессишĕн, пухнă сведенисене пĕтĕмлетессишĕн тата методологи енĕпе тивĕçтерессишĕн ответлă пулса тăракан ĕç тăвакан влаçăн федераллă органне;

– картографи материалĕсем хатĕрлессине йĕркелессишĕн тата методика тĕлĕшпе тивĕçтерессишĕн ответлă шутланакан ĕç тăвакан влаçăн федераллă органне;

– çынсен уйрăм категорийĕсен перепиçне ирттерессишĕн ответлă пулса тăракан ĕç тăвакан влаçăн федераллă органне;

– çынсем пирки сведенисем пухакансен хăрушсăрлăхне тивĕçтерессишĕн, перепиç хучĕсене тата перепиçпе çыхăннă ытти документсене сыхлассишĕн ответлă ĕç тăвакан влаçăн федераллă органне.

Çӳлте асăннă федераллă органсем перепиç ирттерессипе хăйсен полномочийĕсене пурнăçланă чух Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен ĕç тăвакан влаç органĕсем çыхăнса ĕçлеççĕ.

Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен ĕç тăвакан влаç органĕсемпе вырăнти самоуправлени органĕсем хăйсен полномочийĕсемпе килĕшӳллĕн пĕтĕм халăх перепиçне ирттерессишĕн ответлă пулса тăракан ĕç тăвакан влаçăн федераллă органне пулăшма тивĕç. Вĕсем муниципаллă йĕркеленӳсен переченне, вĕсен чиккисене палăртаççĕ, урамсен ячĕсем, çуртсемпе хваттерсен номерĕсем пуррипе çуккине тĕрĕслеççĕ, кирлĕ картографи материалĕсене тăратаççĕ, сведенисем пухакан çынсем валли пӳлĕмсем уйăрса параççĕ, çыхăнупа, транспорт хатĕрĕсемпе тивĕçтереççĕ, перепиç хучĕсемпе ытти документсене упрама майсем туса параççĕ т. ыт. те.

Вырăнти самоуправлени органĕсем кунпа пĕрлех муниципаллă йĕркеленӳсен территорийĕнче пурăнакан çынсем пирки сведенисем пухас ĕçе уйрăм çынсене явăçтарас енĕпе те пулăшу кӳме тивĕç.

З. ВИНОГРАДОВА,
Чăвашстатăн предприятисен статистикин Муркаш районĕнчи пайĕн тĕп специалист-эксперчĕ.

Информаци кунĕ

Çур акине хатĕрленесси, ĕçпе тивĕçтересси

Паян районта пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Унăн теми: çурхи ака-суха ĕçĕсене хатĕрленессипе вырăнти влаç умĕнче тăракан задачăсем, ял çыннисене ĕçпе тивĕçтермелли хушма мерăсем çинчен.

Информаци ушкăнĕсем «Моргаушская» МСОра, Муркашри кирпĕч заводĕнче, сĕт заводĕнче, «Россельхозбанк» уйрăмĕнче, Муркашри больницăра, шалти ĕçсен пайĕнче, Йӳçкасси, Çатракасси, Мăн Çĕнтĕр ял тăрăхĕсенче пулаççĕ.

Çамрăксен çулталăкĕ

Çамрăк çемьесен клубĕсенче – хĕрӳ тапхăр

Кăçал Раççейре Çамрăксен çулталăкĕ пулнă май районта тата республика шайĕнче çамрăк çемьесен клубĕсем хушшинче ăмăрту иртет. Кашни ял тăрăхĕнчех çамрăк çемьесен клубĕсем ĕçленине пĕлетпĕр-ха. Халĕ вара вĕсен хăйсен ĕçне туллин кăтартма питĕ лайăх май тупăнчĕ. Клубсенче çак эрне пуçламăшĕнчех хĕрӳ тапхăр пуçланнă та ĕнтĕ, пурте ĕçе кӳлĕннĕ.

Клубсем хатĕрленĕ видеороликсемпе ытти интереслĕ ĕçсене мартăн 25-мĕшĕччен районти вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕнче йышăнаççĕ. Çакăн хыççăн ятарлă эксперт комиссийĕ тишкерсе тĕрлĕ номинацисемпе çĕнтерӳçĕсене палăртать. Чи пултаруллисене республика ăмăртăвĕ кĕтет.

Райадминистрацире

Хастар ĕçпе тивĕçнĕ

«Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин, Чкалов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн, Муркашри кирпĕч завочĕн тата Мăн Çĕнтĕр райповĕн ĕç коллективĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн 2009 çулхи мартăн 5-мĕшĕнчи 134 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Галина Зосимовна КОНСТАНТИНОВАНА**, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинчи çăмартасем йышăнакана;

– **Галина Леонидовна ФИЛИППОВАНА**, Чкалов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн машинăпа ĕне сăвакан операторне.

2. Нумай çул тăрăшса вăй хунăшăн тата обществăлла ĕçсене хастар хутшăннăшăн:

– **Маргарита Ивановна АНИСИМОВАНА**, «Муркашри кирпĕч завочĕ» уçă акционер обществин садчикне;

– **Анеля Ивановна ФЕДОРОВАНА**, «Муркашри кирпĕч завочĕ» уçă акционер обществин съемщикне.

3. Потребительсен кооперацийĕнче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Зинаида Степановна ЛЮБИМОВАНА**, Мăн Çĕнтĕр райповĕн ревизи комиссийĕн председательне;

– **Алевтина Александровна ЩЕРБАКОВАНА**, Мăн Çĕнтĕр райповĕн «Лидер» магазин заведующине.

4. Çынсен ыйтăвĕсене тивĕçтерессин сферинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Лидия Витальевна ХАРИТОНОВАНА**, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинчи столовăй заведующине.

Саламлатпăр

Юратнă аннене, хаклă мăшăра, ырă кăмăллă асаннене – Шупуç ялĕнче пурăнакан **Мария Александровна БЕЛОВАНА** 60 çулхи юбилейпа чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Эсĕ нумай çул хушши Очăкассинчи шкулта учитель пулса ырми-канми тăрăшрăн. Пире те ăс парса пурнăç çулĕ çине тăратрăн. Эсĕ ялан ĕçченлĕхӳпе тата ырă кăмăлупа палăрса тăратăн. Вăрăм кун-çул, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунатпăр. Эпир вара саншăн, хамăрăн чи çывăх çыншăн, яланах савăнатпăр, сана юрататпăр, çĕр çинчи мĕн пур ырлăха сунатпăр.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, виçĕ ывăлĕ, икĕ кинĕ, тăватă мăнукĕ тата çывăх тăванĕсемпе хăти-тăхлачисем.

Иккĕмĕш çур çул валли çырăнтараççĕ

Хаклă вулакансем! Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата иккĕмĕш çур çулта илсе тăма унченхи хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.

Райхаçат редакцийĕ.